

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ паян мĕнле аталанать-ха? Абитуриентсене тата ашшĕ-амăшне мĕнле ыйтусем хумхантараççĕ? Çак тата ытти ыйтусем çине университет ректорĕ, Раççей Федерацийĕн аслă професси вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ **Андрей АЛЕКСАНДРОВ** хуравлама кăмăл турĕ.

**- Андрей Юрьевич, аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕме шухăшлакансемшĕн хĕрӳ тапхăр пуçланчĕ. Каласа парăр-ха тархасшăн, çамрăксем мĕнле специальноçсене хальхи вăхăтра ытларах ыйтаççĕ?**

- Çак кунсенче федераци ĕç служби Раççей предприятийĕсенче çителĕксĕр професси представителĕсене асăнчĕ, кусем вĕсем - инженери отраслĕн специалисчĕсем. Кунсăр пуçне 2017 çулта ĕç паракансем ытларах чухне наукăпа техникăри тата гуманитаринчи чи пысăк квалификаци профессионалĕсене ыйтни палăрать.

**- Аслă вĕренӳ заведенине вĕренме пыракансем вара мĕнле профессисемпе ытларах интересленеççĕ?**

- Техника енĕн сумĕ ӳссе пыни палăрать. Мĕншĕн тесен кун пек пĕлӳ илнĕ май вĕренсе тухакансен тивĕçлĕ ĕçе вырнаçма тата япăх мар ĕç укçи илме шанăç пысăк.

Абитуриентсем медицина тата фармацевтика специальноçĕсене тимлĕх уйăраççĕ. Яланхи пекех отрасльсем хушшинчи профессисем илĕртӳллĕ: экономист, юрист, менеджер, маркетолог. Кунта вара çакна палăртса хăварма тивет. Хальхи вăхăтра кун пек специальноç илнисем пайтах. Паллă ĕнтĕ, çакă вăл вĕренсе тухакансенчен нихăшĕ те ĕç тупайманни пирки каламасть, ĕçе вырнаçма кăна йывăртарах пулма пултарать. Юрăхлă ĕç шырама вара студент çулĕсенченех тытăнас пулать: ĕç паракансен вакансисен ярмăрккисемпе мастер-класĕсене çӳремелле, наука тĕпчевĕсене тата проект ĕçне-хĕлне хутшăнмалла, производство практики вăхăтĕнче хăйсене лайăх енчен кăтартма тăрăшмалла.

Историпе, филологипе, ют çĕршыв чĕлхисемпе, журналистикăпа интересленекенсем сахалах мар. Пирĕн ĕç паракан партнерсем хăйсен пулас сотрудникĕ хутла лайăх пĕлтĕр теççĕ. Ĕçлеме пыракан çĕнĕ çын хальхи вăхăтри нумай даннăйсене тишкерсе хак пама пултартăр. Компьютер техникипе, тĕрлĕрен программăсемпе ĕçлеме пултарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Университет вĕренӳ программисен анлă спектрне сĕнет. Вĕсем пирки вĕренме кĕрекенсем, ашшĕ-амăшĕ тата учительсем университетăн сайтĕнче (chuvsuĕru) пĕлме пултараççĕ. Чăваш патшалăх университечĕ Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕн общество аккредитацийĕ витĕр тухнă 100 аслă вĕренӳ заведенийĕ шутне кĕрет. 2016 çулта вĕренĕвĕн "Экономика", "Менеджмент", "Финансы и кредит", "Химия", "Химическая технология", "Энерго- и ресурсосберегающие процессы в химической технологии, нефтехимии и биотехнологии", "Фармация" программисем пĕтĕм тĕнчери профессипе общество аккредитацийĕ витĕр тухнă.

**- Питĕ аван. Калăпăр, шкултан вĕренсе тухакан хăйне валли пулас профессие суйласа илнĕ. Аслă вĕренӳ заведенине унăн епле суйласа илмелле пулать-ха; Вăл хăш вĕренӳ заведенине суйласа илнинчен унăн малашлăх карьери те килет вĕт?**

- Абитуриентсен, вĕсен ашшĕ-амăшĕн суйласа илнĕ вĕренӳ заведенийĕн студенчĕсемпе, преподавательсемпе тата заведенирен вĕренсе тухнисемпе канашласа пăхни ытлашши пулас çук. Вĕренӳ корпусĕсенче, общежитире пулса курма, университетăн партнер организацийĕсене экскурсие кайса пăхма сĕннĕ пулăттăм. Хальхи вăхăтра кун пек майсем пур. Университет студенчĕсем предмет олимпиадисене, интеллектуаллă конкурссене хутшăнаççĕ-и, кăтартусем еплерех, вĕренӳ заведенийĕн индустри партнерĕсемпе йĕркеленĕ база кафедрисемпе пĕрлехи лабораторисем пур-и, спорт тата культурăпа социаллă лару-тăру мĕнле шайра, стипендисем тĕлĕшпе мĕнле, академи тата

общество активлăхне хавхалантармалли система ĕçлет-и? Çак ыйтусемпе те интересленсе пăхас пулать.

**- Абитуриентсенчен кирек хăшĕ те вĕренӳ заведенийĕн бюджет уйрăмне вĕренме кĕме тăрăшать. Çакна ăнланмалла та.**

- Эпĕ палăртса хăвартăм ĕнтĕ, юлашки çулсенче патшалăх инженер специальноçĕ çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çавăнпа та техника факультечĕсенчи бюджет вырăнĕсем те нумайланса пыраççĕ. Кăçал Чăваш патшалăх университетне 1400-тен ытла бюджет вырăнĕ уйăрса pană пулсан, 545-шĕ - информатикăпа шутлав техникин, энергетикăпа электротехникăн, радиоэлектроникăпа автоматикăн, прикладной математикăн, физикăпа информаци технологийĕсен, машиностроенипе строительство факультечĕсем валли. Кунсăр пуçне хатĕрлевĕн чылай енĕпе тĕллевлĕ йышăну квотисене пăхса хунă. Тĕллевлĕ йышăну валли ĕç тăвакан влаç органĕсемпе е предприятисемпе тата организацисемпе килĕшӳ тăваççĕ.

**- Стипенди - студент пурнăçĕн пĕлтерĕшлĕ кăтартăвĕ. Чăваш патшалăх университетĕнче унăн виçи мĕн чухлĕ?**

- Бюджет мелĕпе вĕренекен студентсен вăл пирĕн университетра 1800 тенкĕпе танлашать. Çав вăхăтрах Раççейри аслă вĕренӳ заведенийĕсенчи бюджет уйрăмĕсенче чи пĕчĕк академи стипендийĕ - 1340 тенкĕ. Вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракансем пысăкрах стипендие тивĕçеççĕ. Отличник сесси итогĕсемпе 2700 тенкĕ илейрет. Экзаменсене "питĕ лайăх" тата "лайăх" паллăпа тытнисен стипенди 2250 тенкĕ пулать.

Анчах та çакă кăна мар. Обществăлла усăллă ĕçе хутшăнакансене хушса хавхалантарма пăхнă. Кусем вĕсем наукăри тĕрлĕрен çитĕнӳсемшĕн, олимпиадăсене тата университетăн культурăпа спорт пурнăçне хутшăннăшĕн. Активистсене ӳстернĕ стипенди 4000 тенкĕ тӳлетпĕр.

Кунсăр пуçне активист студент тĕрлĕрен ятарлă стипендисене те, вăл шутра университетăн попечительство канашĕн стипендине те тивĕçме пултарать.

**- Нумай абитуриентшăн аслă вĕренӳ заведенине суйласа илнĕ чухне тĕрлĕрен социаллă гарантисем пурри пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Общежитире вырăн илме пултарассинех илер.**

- Малтанах çавна палăртса хăваратăп. Пирĕн университетăн хальхи инфраструктурине йĕркеленĕ: 20 вĕренӳ корпусĕ, 900 вырăнлă хамăрăн Культура керменĕ пур. Университетăн санатори-профилакторийĕнче çуллен 1000 студент хăйсен сывлăхне çирĕплетет. Спорт комплексĕ 5000 тăваткал метр лаптăк йышăнать. Университетăн наука библиотеки - республикăра чи пысăкки. Столовăйсемпе буфетсем пĕтĕмĕшле 1000 вырăнлăх.

Кăнтăрлахи уйрăма вĕренме ытти хуларан килнисене общежитипе тивĕçтеретпĕр. Чи малтанах - социаллă хӳтлĕхсĕррисене. Палăртса хăварасшăн, вĕренекенсенчен ытларахăшĕ общежитие тивĕçет. Университет общежитийĕсем вара хăтлă. Иртнĕ çул эпир 7-мĕш номерлĕ общежитие тĕпрен юсарăмăр. Юсав ĕçĕсем ытти общежитире те пыраççĕ.

**- Вĕренӳ заведенийĕ вăл - вĕренӳ кăна мар вĕт-ха. Студент пурнăçĕнче интересли занятисем хыççăн та пайтах...**

- Студент çулĕсем çыннăн пурнăçĕнче чи лайăххисем шутланаççĕ. Ку вăл чăннипех те çапла пултăр тесе университет пĕтĕмпех тума тăрăшать.

Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕ хăйне тĕрлĕ енпе аталантарма пултарать. Калăпăр, спорт енĕпе. Спорт клубĕнче 18 секци ĕçлет. Факультетсемпе общежитисен спартакиадисене ирттеретпĕр, пĕрремĕш курсра вĕренекенсем уйрăммăн ăмăртаççĕ. Пирĕн патра футбол, хоккей, баскетбол, волейбол енĕпе университет командисене йĕркеленĕ. Вĕсем Раççей шайĕнче те çитĕнӳсем тăваççĕ. Умлă-хыçлă икĕ çул хушши ĕнтĕ университетăн пĕрлештернĕ команди - республикăри аслă вĕренӳ заведенийĕсен универсиадин çĕнтерӳçи.

Иртнĕ çул университетра ГТО нормисене пама хатĕрленмелли студи уçрăмăр. Кунти спортзалра хальхи оборудовани вырнаçтарнă. Студентсем ГТО нормисене пама çакăнта хатĕрленеççĕ.

Пултарулӑх енӗпе те ӑнтӑлмалли ҫук мар. Хамӑрӑн Культура керменӗнче конкурссем чылай ирттеретпӗр: "Стань звездой", "Мистер и Мисс ЧГУ" тата, паллӑ ӗнтӗ, пурте кӑмӑллакан "Студенческая весна" фестиваль.

Кам хӑйне наукӑра кӑтартасшӑн, вӗсем валли университетра студентсен конструктор бюровӗсене 15 йӗркеленӗ. Конференцисем тӑтӑшах иртеҫҫӗ. Пулас ученӑйсем хӑйсен тӗпчевӗсемпе ҫӗршыври ытти вӗренӳ заведенийӗсене кайса паллаштараҫҫӗ. Олимпиада юхӑмӗ те университетра анлӑ сарӑлнӑ.

Нумаях пулмасть юридици факультечӗн иккӗмӗш курс студенчӗсем Раҫҫейри академи ушкӑнӗсем хушшинче чи лайӑххисем пулса тӑчӗҫ. Кунпа эпир чӑннипех те мухтанма пултаратпӑр.

**- Наука ҫитӗнӗвӗсем те вӗренӳ заведенине суйласа илесси ҫине витӗм кӳме пултараҫҫӗ вӗт?**

- Паллах. Аслӑ вӗренӳ заведенийӗн преподаватель ӗҫӗ-хӗлӗпе кӑна ҫырлахса пурӑнмалла мар. Ҫавӑн пекех наука тӗпчев ӗҫне те хутшӑнмалла.

ЧПУ - республикӑри чи пысӑк наукӑпа вӗренӳ центрӗ. Наукӑпа педагогикӑн 22 шкулӗ, диссертаци канашӗсем 4 ӗҫлеҫҫӗ, аспирантура тата докторантура пур. Наукӑпа тӗпчев ӗҫӗсене 97 кафедрӑра, 22 лабораторире ирттереҫҫӗ.

Пирӗн университет бази ҫинче транспорт тата ял хуҫалӑх машиностроенийӗн Шупашкарти инжиниринг центрне туса хунӑ. Ҫак проекта пурнӑҫа кӗртме вӗренӳ заведенине 100 млн тенкӗ уйӑрса панӑ. Иртнӗ ҫул вӗҫӗнче университет акционерсен "Чебоксарское производственное объединение имени В.И. Чапаева" обществипе пӗрле Раҫҫей Вӗренӳ тата наука министерствин конкурсӗнче ҫӗнтерсе 99 млн тенкӗ грант илме пултарчӗ.

**- Вĕренӳ заведенийĕ тĕнче шайĕнче хутшăнусем йĕркелени - кирек хăш университетăн та хальхи сăн-сăпачĕ.**

- Питĕ тĕрĕс сăмахсем. ЧПУ тĕнче шайĕнчи хутшăнусене аталантарса пырать. Пирĕн партнерсем хушшинче - Итали, Испани, Канада, Белоруси, Армени, Германи, Казахстан, Норвеги тата ытти çĕршывсен аслă вĕренӳ заведенийĕсем. Юлашки 5 çул хушшинче 700 ытла студент, аспирант тата преподаватель академи ылмашăвĕ шучĕпе ют çĕршывсенчи вĕренӳ заведенийĕсенче пулнă.

2015 çултанпа Чăваш патшалăх университечĕ Китай ĕçтешĕсемпе тачă хутшăнма пуçларĕ. Кун пек хутшăну килĕшĕвĕсене 9 йĕркеленĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн студентсенчен хăшĕсем Аньхой, Гуйжоу, Сычуань провинцийĕсенче пĕлӳ илеççĕ. Кунсăр пуçне Китайри вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсемпе ученăйĕсем пирĕн пата вĕренме тата вĕрентме килеççĕ. Университетра Китай культура центрне тата Китай вĕренӳ центрне йĕркеленĕ.

**- Андрей Юрьевич, ыйтусене хуравлама килĕшнĕшĕн тав сăмахĕ калатпăр.**

- Калаçушăн хăвăра та тавтапуç. Шкултан вĕренсе тухакансене хăйсене килĕшекен профессие тĕрĕс суйласа илме тата малашнехи карьерăна ăнăçлă йĕркелеме сунатăп. Ку тĕлĕшпе вара вĕренӳ заведенине тĕрĕс суйласа илни те пĕлтерĕшлĕ.